**Чăваш сăвви**

Авал, патша пур чухне...
Пирĕн чăваш яльсенче,
Вăрттăн çĕрте пытанса,
Йăвашланса, вăтанса
Пĕр саркайăк пурăннă —
Пит имшеркке курăннă.
Ăна чăваш ваттисем
Çĕрне-кунне пĕлмесĕр,
Хĕлĕн-çăвĕн ĕçлесе,
Хырăç-марăç тӳлесе,
Хĕрӳ ĕçре, туйсенче,
Уявсенче, уйсенче
Ачашласа усранă.
Юнлă патша тарçисем
Ăна сума сумасăр,
Ним вырăнне хумасăр,
Кулса тăнă хурласа,
Хуласене ямасăр,
Çӳреме çул памасăр.
Халĕ ĕнтĕ вăл кайăк
Хулара та пурăнать,
Таçти çĕршывсенче те
Вутăн-хĕмĕн курăнать.
Сасси лайăх юрлама,
Юрри хитре итлеме:
Революци ырлăхпе
Хăй тытăнчĕ питлеме.
Юрла-юрла, сар кайăк,
Шăпчăк сас пек сассупа!
Санăн юнна ĕçекен
Тăшман сăнни хуçăлчĕ!
Сана ирĕк янрама
Аслă тĕнче уçăлчĕ!

*Шелепи, Н. Чăваш сăвви : [сăвă] // Шелепи, Н. Ача-пăча сăввисем / Н. Шелепи. – Шупашкар, 1936. – С. 3-4.*